ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

ÇУТ ÇАНТАЛĂК ПУЛĂМĔСЕМПЕ АНСАТТĂН ПАЛЛАШТАРАССИ

Вĕрентӳллĕ вăйăсен пуххи

Шкул умĕнхи вĕренĕвĕн программине
2–3 çулхи ачасемпе пурнăçлакан воспитательсем валли
хатĕрленĕ меслет кăтартăвĕ

Шупашкар 2021

УДК 373.2 (072)
ББК 74.262.0я70
Ç 90

Пухса хатĕрлекенĕсем:

***С.Г. Морозова*,** Шупашкарти Н.В. Никольский ячĕллĕ професси колледжĕн преподавателĕ

И.В. Ядранская, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн регион аталанăвĕ центрĕн ертӳçи

Пособие хатĕрлеме хутшăннă педагогсем:

Л.А. Смирнова, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн регион аталанăвĕ центрĕн методисчĕ

Н.О. Измайлова, Чăваш Республикинчи Шăмăршă районĕнчи Кивĕ Чукалти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул воспитателĕ

Н.П. Гаврилова, Чăваш Республикинчи Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршăри «Василек» ача сачĕн воспитателĕ

Р.П. Козлова, Чăваш Республикинчи Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршăри «Василек» ача сачĕн воспитателĕ

Ç 90 Шкул çулне çитмен ачасене çут çанталăк пулăмĕсемпе ансаттăн паллаштарасси / С.Г. Морозова, И.В. Ядранская пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ. 2021. – 32 с.

Меслет кăтартăвне «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» программăпа ĕçлекен педагогсене, çавăн пекех шкул çулне çитмен ачасене çут çанталăк пулăмĕсемпе паллаштаракансене пулăшас тĕллевпе хатĕрленĕ.

УДК 373.2 (072)
ББК 74.262.0я70

© С.Г. Морозова, И.В. Ядранская пухса хатĕрленĕ, 2021
© ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

УМĔН КАЛАНИ

Вĕрентӳллĕ вăйăсен пуххине шкул умĕнхи вĕренĕвĕн программине 2–3 çулхи ачасемпе пурнăçлакан воспитательсем валли хатĕрленĕ.

Пособи «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» (Н.Е. Вераксы, Т.С. Комарова, М.А. Васильева редакциленĕ) программа çинче никĕсленет, кĕçĕн ӳсĕмри иккĕмĕш ушкăна çӳрекен ачасене çут çанталăкăн ансат ăнланăвĕсемпе паллаштарать.

Ачасене çут çанталакăн пулăмĕсемпе ансаттăн паллаштармалла. Тавралăхра, ӳкерчĕксенче, ку е вăл теттере кил чĕр чунĕсене, кайăк-кĕшĕке (кушака, йытта, ĕнене, чăхха т. ыт. те), вĕсен çурисемпе чĕпписене палласа илме тата ячĕсене калама вĕрентмелле. Ӳкерчĕкре хăш-пĕр тискер чĕр чуна (упана, мулкача, тилле т. ыт. те) палласа илме, ячĕсене калама хăнăхтармалла.

Ача пахчин çĕр лаптăкĕнче кайăксене, хурт-кăпшанка (лĕпĕше, уяра), аквариумри пулăсене сăнаттармалла. Кайăксене апат пама вĕрентмелле.

Кӳлепи тăрăх пахча çимĕçĕсене (помидора, хăяра, кишĕре) тата улма-çырлана (пан улмине, грушăна т. ыт. те) уйăрса илме вĕрентмелле.

Ачасене çут çанталăк илемне çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те асăрхама пулăшмалла.

Мĕн пĕчĕкрен ачасен чĕр чунсене хĕрхенес туйăм аталанмалла. Пĕчĕкскерсене çут çанталăкпа хутшăнмалли йăла-йĕркен паллăрах енĕсене вĕрентмелле (ӳсен-тăранпа чĕр чунсене тытса пăхнă чух вĕсене сиен кӳрессинчен асăрханмалла; çанталăк мĕнлине кура тăхăнмалла т. ыт. те).

Пособире вĕренӳ ĕçĕсене кĕскен палăртнă, тĕллевĕсене, кăтарту хатĕрĕсене, ирттермелли сăнавсене асăнса хăварнă. Уйрăм ĕçсене уçă сывлăшра ирттерме сĕннĕ. Ачасемпе ĕçлемелли меслетсем (экскурсисем, калаçусем, сăнавсем, чĕрĕ çут çанталăка сăнани, опытлă ĕç-хĕл, вăйăсем) тĕрлĕрен пулма пултарнине кăтарса хăварнă.

Меслет кăтартăвĕ çут çанталăкпа паллаштарас ĕçре воспитательсемшĕн усăллă хатĕр пуласса шанатпăр.

Çулталăкăн тĕрлĕ тапхăрĕнче ирттермелли сăнавсем

Кĕркунне. Çут çанталăкра пулса иртекен ку е вăл улшăну çинчен ансат пĕлӳ памалла: сивĕтрĕ, йывăç çулçисем сарăхса тăкăнаççĕ. Кĕр пулсан нумай пахча çимĕçпе улма-çырла пиçсе çитни çинчен ăнкару йĕркелемелле.

Чĕрĕ çут çанталăка сăнанă май кайăксем çинчен (кăвакарчăн, курак, çерçи) пĕтĕмĕшле пĕлӳ памалла: кайăксен пуçĕ, хӳри, икĕ çунат, икĕ ура, сăмси пур, кайăксем тĕклĕ, вĕçеççĕ, сиккелеççĕ, пĕрчĕ сăхаççĕ.

Кураксем кранклатаççĕ, çерçисем чĕриклетеççĕ, кăвакарчăнсем кăвиклетеççĕ. Вăйă вылана май кайăксен сассисене итлеттерме пулать.

Уçăлса çӳренĕ чух лĕпĕшсене, вир кайăкĕсене ытти тĕрлĕ кăпшанкăна кăтартмалла. Вĕсем вĕçме пултарнине (çуначĕсем пур), сывланине (пуçĕ пур), чупнине каламалла. Сивĕтсен хурт-кăпшанкă пытаннине пĕлтермелле.

Йывăçсемпе (чăрăш, хурăн, пилеш, вĕрене) паллаштармалла: вĕсен çулçи, туни, тымарĕ пур. Йывăç çӳллĕ, курăк лутра. Кĕркунне йывăçсен çулçисем тĕрлĕ тĕслĕ (сарă, хĕрлĕ, симĕс) пулаççĕ. Кĕркунне çулçăсем тăкăнаççĕ, чăрăш çеç симĕс юлать. Йывăçсем çинче кайăксем лараççĕ, пилешĕн хĕрлĕ çырлисене çиеççĕ.

Курăкăн тымарĕ çĕр ăшĕнче. Курăк лутра, ăна татса илме пулать. Курăк кĕркунне сарăхать. Клумбăсенче хĕрлĕ, шурă, кăвак астра ӳсет.

Улма-çырла (пан улми, груша, чие) çинчен каласа памалла, вĕсене палласа илме вĕрентмелле. Улма-çырла йӳçĕ те, пылак та пулма пултарнине палăртмалла.

Пахча çимĕçе (кишĕр, помидор, хăяр) кĕркунне пуçтарнине, вĕсен тĕсĕ, калăпĕ тĕрлĕрен пулни çинчен каласмалла. Кишĕр, помидор, хăяр пахчара ӳсеççĕ.

Чĕрĕ мар çут çанталăка сăнанă чух хĕвел, çил, тӳпе, çумăр, шыв, хăйăр çинчен каласмалла. Хĕвел çĕре ăшăтать, час-часах пĕлĕтпе хупланать. Тӳпе кăвак тĕслĕ, хура пĕлĕтсем çумăр е юр илсе килеççĕ. Çумăр сивĕ те ăшă та пулма пултарать. Çумăр айĕнче сунчăкпа çӳреççĕ. Çумăр хыççăн кӳлленчĕксем пулаççĕ. Кӳлленчĕксем тăрăх атă тăхăнса çӳремелле.

Çил ăшă та сивĕ те пулать. Сивĕ çил вĕрнĕ чухне ăшăрах тăхăнмалла.

Шыв юхать, тăрă, таса е вараланчăк пулать. Сивĕтсен шыв шăнать, пăрланать.

Хĕлле. Çут çанталăкăн хĕллехи пулăмĕсем çинчен чухлав (сивĕтрĕ, юр çăвать) йĕркелемелле. Хĕллехи вăйăсене (тăвайкки çинчен çунашка-па ярăнни, юр чăмаккисемпе перкелешни, юр кĕлетке, юр ача туни т. ыт. те) явăçтармалла.

Чĕрĕ çут çанталăка сăнанă май кайăксене, чĕр чунсене хĕлле сивĕ пулнине, çынсем вĕсем валли сырăшсем хатĕрленине, апат панине каламалла.

Хĕлле йывăççем (хурăн, вĕрене, пилеш) çулçăсăр, юрпа витĕннĕ. Чăрăш çеç сип-симĕс ларать. Çил вĕрсен йывăççем çинчен юр вĕçсе ўкет. Курăк курăнмасть, вăл юр айĕнче.

Хĕвел çинче юр йăлтăртатать. Хĕвел пăхман чухне кун тĕксĕм пулать. Хĕвел пăхсассăн та урамра сивĕ, çавăнпа ăшă тăхăнмалла.

Тўпе кăвак, сăрă. Хăвăрт тĕттĕмленет. Сивĕ çил вĕрет, çил-тăман тустарать.

Юр шурă, сивĕ, çăмăл, хĕвел çинче йăлтăртатать. Юр пĕрчи лапка-лапка ўкет. Юртан юр чăмăркки, юр кĕлетки тума пулать. Ăшă çĕрте юр ирĕлет.

Çуркунне. Çут çанталăкра çур кунĕсенче пулакан улшăнусем çинчен тивĕçлĕ тĕшмĕртў йĕркелемелле: ăшăтрĕ, юр ирĕлет; шыв кўлленчĕкленет, симĕс курăк тухать, хурт-кăпшанкă вăранать; йывăççем кăчкăна лараççĕ (кăчкă кăлараççĕ).

Çуркунне йĕри-тавра кайăксен сасси илтĕнет. Кайăксем йăва çавăраççĕ, шăнкăрчсем вĕçсе килеççĕ, йăвисене йышăнаççĕ, чĕпсем кăлараççĕ, чĕпписене хурт-кăпшанкă çитереççĕ.

Хурт-кăпшанкă чĕрĕлет, шăнасем, лĕпĕшсем вĕçеççĕ, кăткăсем чупаççĕ. Ăмансем тухаççĕ, вĕсем вăрăм, шуса çўреççĕ.

Йывăççем çулçăсем сараççĕ. Çĕмĕрт шап-шур çеçкере, йĕри-тавра тутлă шăршă сарăлнă.

Сирень тĕмми чечеке ларнă. Тĕмĕсем йывăçран лутрарах, курăкран çўллĕрех. Тĕмĕсене хуçма юрамасть.

Çуркунне çынсем çамрăк хунавсем, тĕмĕсем лартаççĕ, тавралăха илемлетеççĕ.

Пахча çимĕç акаççĕ (пăрça, кишĕр), лартаççĕ (сухан, çĕр улми). Пăрça шултра, çаврака, кишĕр вăрри вара вĕтĕ те тăрăхла.

Симĕс курăк шăтать. Кукша пуç сап-сарă чечекре. Чечекĕн çулçи, ту-

ни, тымарĕ, чечекĕ, вăрри пур. Кукша пуç вăрри пулса çитсен шап-шурă мамăкĕ пур еннеле те вĕçет. Çурхи чечексем тухаççĕ (çеçпĕл).

Чĕрĕ мар çут çанталăкра та сăнамалли питĕ нумай: хĕвел хĕртет, юр ирĕлет, тумла юхать, тӳпе кăн-кăвак. Тĕттĕм пĕлĕтсем çумăр илсе килеççĕ. Ăшă çил вĕрет. Çил йывăççене силлет. Аслатиллĕ çумăр çăвать. Çумăр пĕрчисем шултра та, вĕтĕ те пулаççĕ. Çумăр хыççăн йĕри-тавра (йывăççем, курăксем, çуртсем, асфальт) йĕпе.

Шыв та ăшăнать, кӳлленчĕкри шыва кайăксем ĕçеççĕ. Хăйăр куписем юр айĕнчен тухаççĕ, хăйăртан «кукăль» пĕçерме пулать.

Çулла. Çут çанталăк улшăнăвне сăнамалла: хĕвел хĕртсе пăхать, шăрăх, лĕпĕшсем вĕçеççĕ, ӳсен-тăран чечеке ларать.

Çулла çырласем (хăмла çырли, çĕр çырли, хурлăхан) пулса çитеççĕ. Вĕсем питĕ тутлă.

Пахча çимĕç çитĕнет, вĕсене шăварса тăмалла, çум курăкне çумламалла. Хăяр, помидор пулса çитет. Çимĕçсене çуса çимелле.

Клумбăри чечексем тĕрлĕ тĕслĕ (хĕрлĕ, сарă, кăвак), вĕсем çийĕн хуртăкăпшанкă вĕçет, пыл пуçтарать. Вир кайăк хĕрлĕ тĕслĕ, хура пăнчăллă. Курăк хушшинче шăрчăк юрлать.

Таврана тĕрлĕ чечек (садри, улăхри) илем кӳрет. Чечексене шăрши тăрăх уйăрма пулать.

Хĕвел хытă хĕртет, ăшă (пăчă). Çӳхе тумтир тăхăнмалла, пуçа вĕри хĕвелтен хӳтĕлемелле, косынка çыхмалла, панамка тăхăнмалла. Çынсен шыв ĕçес килет, таса шыв кăна ĕçме юрать.

Аслатиллĕ çумăр çума пултарать. Çумăр хыççăн асамат кĕперĕ тухать. Ăшă çил вĕрет. Çил вăйлă вĕрсен тусан, хăйăр çĕкленет. Çил йывăççене хуçма пултарать.

Ачасем хăйăр купи çинче выляççĕ. Типĕ хăйăр сапаланать, йĕпе хăйăр çыпăçать. Йĕпе хăйăр çинче ура йĕрри юлать. Хăйăрпа выляна хыççăн алăсене çумалла.

Çулталăк вĕçĕнче ачасем мĕн-мĕн тума пултармалла:

• килти чĕр чунсене (выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке) тата тискер чĕр чунсемпе кайăксене, чĕр чунсен çурисемпе кайăксен чĕпписене паллама;

• пахча çимĕçе, улма-çырлана, йывăççене уйăрма (1–2 тĕс);

• çут çанталăкăн çулталăк тапхăрĕпе çыхăннă пулăмсем çинчен хăшпĕр тĕшмĕртӳ пуррине кăтартма.

Çакна та ас тумалла, сăнавсем ирттернĕ чухне тĕрлĕрен вăйă вылят-

тармалла (кайăксем пек вĕçĕр, çулçă пек çаврăнăр), сăвă-юрă вĕрентмелле («Чи-чи кăсăя», «Шурă юр»), пăхмасăр калаттармалла, экспериментсем (хăйăрпа, шывпа, юрпа, пăрпа) тумалла.

Сăнавсем ачасемшĕн кăсăклă пулмалла, çут çанталăк пулăмĕсем çинчен пĕлес туртăма аталантармалла.

Сăнава пĕтĕмĕшле педагог ертсе пырать. Ачасемпе пĕрле сăнани-тишкерни ятарлă йĕркене пăхăнать. Сăнав тĕллевне палăртнă чухне ачасен ўсĕмне шута илмелле. Тĕллев ачасемшĕн ăнланмалла, уçăмлă пулмалла. Тишкерўсем ачасен шухăшлавне, тавра курăмне, тавçăрулăхне аталантарма пулăшмалла.

Пĕр-пĕр сăнав ирттерес умĕн педагогăн çакна та асра тытмалла – пĕлў тĕллевне анлăлатса ямалла мар. Ăнлавсем ачасен ăс-тăнĕнче хуллен кулленхи тĕл пулусем урлă çирĕпленмелле, тавра курăма анлăлатмалла.

Сăнавсене ирттернĕ май, ачасен пуплевне аталантармалли çинчен те манмалла мар: çĕнĕ сăмахсемпе ăнлавсене темиçе хут калаттармалла, астуса юлнине тĕрĕслемелле.

2–3 çулхи ачасемпе сăнав ĕçне чĕр чунсене тишкернинчен пуçласан аван. Тишкерў ирттернĕ чух çут çанталăкри пулăмсемпе япаласене танлаштарма, тытса пăхма, евĕрлеме, тĕпчеме майсем туса памалла.

Ачасемпе ĕçлессине темăсем тăрăх планлани

Тема шучĕ	Тапхăр / уйăх	Тема	Программа содержанийĕ
1	Авăн (сентябрь)	Мулкач кишĕр çитерет	Ачасене пахча çимĕçе уйарса илме вĕрентесси, ыр кăмăллăх туйăмне аталантарасси
2	Юпа (октябрь)	Асамçă кĕркунне	Çут çанталăк улшăнăвне сăнама вĕрентесси; çанталăка кура тăхăнмалли çинчен калаçтарасси; йывăç вуллине, туратне, çулçине уйăрма вĕрентесси
3	Чӳк (ноябрь)	Пулă шывра ишет	Аквариумри пулăсем пирки чи ансат пĕлӳ парасси; ачасене кăсăклантарса ярасси
4	Раштав (декабрь)	Сырăш умĕнче	Кайăксене апат памалли сырăшпа паллаштарасси; хĕллехи вăхăтра кайăксене пулăшу кирлине ăнлантарасси
5	Кăрлач (январь)	Юр кĕлеткепе чăрăш	Йывăççсене сăнама вĕрентесси; юртан юр кĕлетки купалама май пуррине кăтартасси; тавралăх илемне курма хăнăхтарасси
6	Нарăс (февраль)	Çăмламас кушак çури	Килти чĕр чунсемпе паллаштарасси, вĕсен çурисене уйăрма вĕрентесси, ачасенче хĕрхенӳ туйăмĕ вăратасси; чăваш кил-çуртĕнчи япалапа – кăмакапа – паллаштарасси
7	Пуш (март)	Автанпа унăн çемйи	Килти кайăксемпе паллаштарасси, вĕсен чĕпписене уйăрма вĕрентесси, чĕр чунсене хĕрхенес туйăм аталантарасси
8	Ака (апрель)	Хĕвел, хĕвел, чӳречерен пăх	Çурхи улшăнусене сăнама хăнăхтарасси; хĕвел ӳкерме вĕрентесси
9.	Çу (май)	Кукша пуç чечекленет	Çурхи чечексене сăнама вĕрентесси; кукша пуçпа паллаштарасси, уйрăмлăхне палăрасси; çут çанталăк илемне курма вĕрентесси.

1-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. **Мулкач кишĕр çитерет**

Тĕллевсем: ачасене пахча çимĕçе уйăрса илме вĕрентесси, ыр кăмăллăх туйăмне аталантарасси.

Кăтарту хатĕрĕсем: мулкач (тетте), пĕр пĕçермен кишĕр тата вĕтетнĕ кишĕр.

Асăрхаттару! Кишĕре вĕри шывпа пăшăхтармалла. Кишĕрĕ çĕнĕ тухăçран пулмалла.

Маларах туса ирттернĕ ĕçсем: ача сачĕн пахчине экскурсие кайни; ӳкерчĕкре хăш-пĕр пахча çимĕçе тата улма-çырлана уйăрса илме хăнăхни; пахча çимĕç муляжĕсемпе тĕрлĕ вăйă ирттерни; пластилинран кишĕр йăваласа калăплани; «Мулкач ларать пашкаса» сăвва каласа хусканусем туни:

Мулкач ларать пашкаса,
Ик хăлхине вылятса.
Ак çапла, ак çапла,
Ик хăлхине вылятса.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Ачасем патне хăнана Мулкач (тетте) килет, хăй пысăк кишĕр тытнă.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, курăр-ха, пирĕн пата хăнана мĕн килнĕ?

А ч а с е м. Мулкач.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр-ха эпир Мулкача сывлăх сунатпăр.

Мулкач та ачасене сывлăх сунать. Ăна воспитатель каластарать.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн пата Мулкач мĕн илсе килнĕ?

А ч а с е м. Кишĕр.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс, Мулкач кишĕр илсе килнĕ.

М у л к а ч. Ачасем, кишĕр пахчара йăран çинче ӳснĕ. Кишĕр çĕр ăшĕнче ӳсет, çавăнпа ăна кăларма йывăр. Мана кишĕре туртса кăларма юлташсем пулăшрĕç. Эпир ăна çĕр ăшĕнчен аран-аран туртса кăлартăмăр! Çак кишĕре эпĕ сире валли илсе килтĕм. Курăр-ха, унăн çеçкисем мĕнле хитре! Симĕс те эрешлĕ. Кишĕрĕн тата хĕрлĕ сарă тымарĕ пур. Çав тымара çиеççĕ. Кишĕр питĕ тутлă тата усăллă, анчах питĕ хытă. Манăн шăлсем çирĕп те çивĕч, çавăнпа эпĕ кишĕре çăмăллăнах кăшлама пултаратăп.

Мулкач кашни ачана кишĕре тытса пăхма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, калăр-ха, кишĕр мĕнле? Çемçе-и е хытă-и?

А ч а с е м. Хытă.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс, кишĕр хытă. Вăл хĕрлĕ сарă тĕслĕ, унăн çеçкисем симĕс. Кишĕр вăрăм тумлам евĕрлĕ. Ачасем, кăтартăр-ха, кишĕр мĕнле? Вăрăм-и?

Ачасем аллисемпе айккинелле сарса кăтартаççĕ.

М у л к а ч. Ачасем, сирĕн кишĕр тутанса пăхас килет-и?

В о с п и т а т е л ь. Ачасен чăнах-та кишĕр тутанса пăхас килет. Тавтапуç, Мулкач, эсĕ питĕ ырă кăмаллă. Ачасем, çиме лариччен малтан мĕн тумалла? Тĕрĕс, алăсене çумалла.

Ачасем аллисене çума каяççĕ. Унтан Мулкач ачасене сĕтел патне чĕнет, вĕтетнĕ кишĕре тутанса пăхма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Мулкач сире валли кишĕр илсе килнĕ. Ку кишĕре чăмлама çăмăлрах пултăр тесе ятарласа вĕтетнĕ.

М у л к а ч. Ачасем, сире кишĕр килĕшрĕ-и?

Ачасем Мулкача тутлă кишĕршĕн тав самахĕ калаççĕ.

М у л к а ч. Сывлăхлă пулăр! Кишĕр ачасемшĕн те, аслисемшĕн те питĕ усăллă.

Мулкач ачасемпе сывпуллашать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир те мулкача тав туса юрă парнелер-ха.

Воспитатель ачасене ташлама хавхалантарать. П. Ялкирĕн «Музыкантпа мулкачсем» сăввине янтраттарать, сăвăра калакан инструментсем çинче выляна пек тăвать.

В о с п и т а т е л ь.

Сĕрме купăс эп калатăп,
Пи-ли-ли, пи-ли-ли!
Мулкачсем садра ташлаççĕ,
Пи-ли-ли, пи-ли-ли!
Ак тăмра кала пуçларăм,
Тинкĕлти, тинкĕлти!
Мулкачсем сиксех ташлаççĕ,
Тинкĕлти, тинкĕлти!
Параппан часах янратрăм,
Пăнтăртам, пăнтăртам!
Мулкачсем тарса çухалчĕç,
Пăнтăртам, пăнтăртам!

2–3 хут выляса илсен воспитатель ачасене мулкачпа сывпуллаштарать.

2-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. **Асамçă кĕркунне**

Тĕллевĕсем: çут çанталăк улшăнăвне сăнама вĕрентесси; çанталăка кура тăхăнасси; йывăç вуллине, туратне, çулçине уйăрма вĕрентесси

Кăтарту хатĕрĕсем: Марине пукане, пукане тумтирĕ.

Маларах туса ирттернĕ ĕçсем: çиле, çумăра, хĕвеле, тӳпене тимлĕ сăнани; кĕркуннехи çулçăсен тĕсĕ улшăннине тишкерени; «Тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем», «Хĕвел тата çумăр» вăйăсем ирттерсе ачасене хавхалантарни; хĕвелпе çумăра ӳкерни.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Вăйăа урамра ирттерсен аванрах.
Воспитатель ачасене сад пахчине уçăлма чĕнет: «Марине пукане те уçăлма тухасшăн. Урама тухас тесен Маринен мĕн тăханмалла?»
Воспитатель ачасемпе пĕрле чӳречерен пăхать, çанталăка сăнать: «Ачасем, урамра çил вĕрет-и? Хĕвел пăхать-и? Çумăр çăвать-и? Паян мĕнле çанталăк?»
Педагог ачасен хуравĕсене çирĕплетет.
Ачасемпе пĕрле Маринене мĕн тăхăнтартмалли çинчен калаçаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Марине, халĕ кĕркунне, çавăнпа уçăлма тухма ăшă тахăнмалла. Малтан колготки, унтан йĕм, кайран вара – атă, ун хыççăн плащ, калпак тăхăнатпăр, шарф çыхатпăр. Тӳпере пĕлĕтсем пулсан, çумăр çума пултарать, çавăнпа пирĕн сунчăк илмелле. Кĕркунне çанталăк хăвăрт улшăнать: ирхине хĕвел пăхма пултарать, çавăнтах çумăр çăвать е çил вĕрет.

Урама тухсан воспитатель ачасемпе çанталăка тепĕр хут сăнать: «Урамра ăшă-и е сивĕ-и? Хĕвел пăхать-и? Çумăр çăвать-и? Çил вĕрет-и?»

В о с п и т а т е л ь. Маринене йывăççемпе паллаштарар-и? *(Ача сачĕн пахчинче ӳсекен йывăç ячĕсене калать, хăй хыççăн ачасене калама ыйтать*)

А ч а с е м. Хурăн, вĕрене, тирек.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Маринене кăтартăр-ха, йывăçăн вулли ăçта? *(Ачасем кăтартаççĕ).* Марине, кур-ха, йывăçăн çирĕп вулли пур. Вĕсем çинче турат нумай, тураттисем çинче çулçăсем ӳсеççĕ. Асăрхăр-ха, кĕрхи йывăç çинче çулçăсем мĕн тĕслĕ?

А ч а с е м. Симĕс, сарă, хĕрлĕ, хĕрлĕ сарă...

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем. Халĕ эпĕ сире Василий Эктел çырнă пĕчĕк сăвă каласа кăтартатăп. Тимлĕ итлĕр.

Çулçăсем
– Кам сăрланă-ши, анне,
Вĕрене çулçисене?
Пулнă тăнă симĕсрен

Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.
– Вăл – асамçă кĕркунне, –
Хуравларĕ ман анне.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, вĕрене çулçисене кам сарланă?

А ч а с е м. Кĕркунне.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, тепĕр сăвă итлĕр. Ячĕ – «Çитрĕ сарă кĕркунне». Ăна Нина Пăрчăкан сăвăçă çырнă.

Çитрĕ ылтăн кĕркунне,
Улăштарчĕ сад тумне.
Сарă тутăр вăл çыхтарчĕ,
Çимĕçе пухса пуçтарчĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, садри йывăç çулçисем мĕн тĕслĕ?

А ч а с е м. Сарă.

В о с п и т а т е л ь. Кĕркунне çулçă тăкăнать. Вăйлă çил вĕрет те йывăç çинчи çулçăсене татса антарать. Ăшă, хĕвеллĕ çанталăкра çулçăсем сывлăшра çаврăнаççĕ-çаврăнаççĕ те çĕр çине майĕпен ўкеççĕ. Ачасем, çулçă сывлăшра мĕнле çаврăннине кăтартăр-ха.

Ачасем пĕр вырăнта тăрса çулçă евĕр çаврăнаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ура айне пăхăр-ха. Курăк çинче тата çĕр çинче тĕрлĕ тĕсле çулçăсем выртаççĕ, çавăнпа ку лаптăк питĕ илемлĕ курăнать.

Ачасем çулçăсем тăрăх утса çўреççĕ, вĕсем ура айĕнчи мĕнле чăштăртатнине итлеççĕ. Темиçе хутчен воспитательпе пĕрле: «*Ш-ш-ш, ç-ç-ç*», – тесе калаççĕ. Унтан хăйсене килĕшекен çулçăсене пуçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пухнă çулçăсене Маринене парнелер-и?

Пукане ачасене тав тăвать, вĕсемпе пĕрле пўлĕме кĕрет.

3-мĕш вĕрентўллĕ вăйă. **Пулă шывра ишет**

Тĕллевĕсем: аквариумри пулăсем пирки чи ансат пĕлў парасси; ачасене кăсăклантарса ярасси.

Кăтарту хатĕрĕсем: аквариумри ылтăн пулă, пулă апачĕ.

Маларах туса ирттернĕ ĕçсем: аквариумри шапа хуранĕпе чулсене сăнани; «Пĕчĕк пулă шывра ишет» пўрне вăйăи выляни:

Çутă та таса шывра
Хавас пулăсем выляççĕ (*алă çупкăмĕпе пулă ишнине катартаççĕ*):
Алхасаççĕ, савăнаççĕ (*пўрнесене чăмăра пуçтараççĕ*),
Хăйăр ăшне пытанаççĕ (*алă çунă пек туса кăтартаççĕ*).

В ă й ă ю х ă м ĕ

Аквариумри ылтăн пулла педагог пӳлĕме илсе кĕрет те ачасене çывăхарах пыма чĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, курăр-ха, ку мĕн? Тĕрĕс, ку пулă, ăна ылтăн пулă тесе калаççĕ. Вăл аквариумра пурăнать, шывра ишет. Пулăсене хăратас мар тесен шăппăн лармалла. Ачасем, шăппăн сăнăр-ха, пулăн мĕн пур? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Çапла, пулăн кĕлетки, хӳри тата çунаттисем пур. Тата унăн хуппи пур. Ылтăн пулă хуппи вара йăлтăркка, ылтăн пек. Ачасем пулăн урисем пур-и? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Çапла, пулăн урисем çук, çавăнпа вăл утаймасть. Ура вырăнне унăн хӳри тата çунаттисем пур, çавна пула пулă шывра ишет. Ачасем, атьăр-ха пулă шывра мĕнле ишнине алăсемпе кăтартар.

Воспитательпе ачасем пулă шывра мĕнле ишнине алăсемпе кăтартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Эпĕ халĕ шыва кăштах апат ярса паратăп. Эсир тимлĕн пăхса ларăр. (*Пулăсене апат парать.*) Ачасем, сăнăр-ха, пулăсем мĕнле çиеççĕ? *(Ачасем хуравлаççĕ).* Çапла, пулă çăврĕпе апатне хыпать те унтан çăтса ярать. Пулла вĕтетнĕ апат памалла, мĕншĕн тесен вăл чыхăнса кайма пултарать. Çавăнпа пулă апатне малтан вĕтетмелле. Эсир мĕнле шутлатăр, пулă хăйне панă апата курать-и? Апатне мĕнпе курать вăл? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Тĕп-тĕрĕс. Ачасем, эсир питĕ маттур! Пулă пирĕн пекех куçпа курать. Аквариумра тата мĕн пур? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Çапла, ачасем, аквариумра тĕрлĕ ӳсен-тăран, вак чулсем, шапа хуранĕсем пур. Хăш-пĕр чухне пулă пĕчĕк чулсем хыçне пытанать, вăл унта канать.

Воспитатель ачасене пулăсене сăнама, мĕн курнине каласа пама ыйтать; ачасен тĕрĕс мар хуравĕсене тӳрлетсе, ăнлантарса пырать.
Кайран пулă апатне кăштах илсе пӳрнисемпе вĕтетме, унтан пулăсене çитерме хушать. Асăрхаттарса хăварать: «Ку апата пулăсене кăна памалла, çынсен ăна çиме те, çăвара хыпма та юрамасть».

В о с п и т а т е л ь. Аквариумри пулăсене çитернĕ хыççăн, ачасем, аллăрсене васкамасăр супăньпе çăвăр.

Çак вăйă хыççăн аквариума пӳлĕмре хăварсан та юрать, ачасем пушă вăхăтра пулăсене сăнама пултараççĕ.

4-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. **Сырăш умĕнче**

Тĕллевĕсем: кайăксене апат памалли сырăшпа паллаштарасси; хĕллехи вăхăтра кайăксене пулăшу кирлине ăнлантарасси**.**

Кăтарту хатĕрĕсем: сырăш, конверт (çыру), кайăксем валли апат (çăкăр тĕпренчĕкĕсем, тырă, хĕвел çаврăнăш).

Маларах туса ирттернĕ ĕçсем: ача сачĕн пахчине вĕçсе килекен кайăксене сăнани; «Вĕçен кайăксем валли апат» темăпа ӳкерени; «Кайăксем вĕçеççĕ» вăйă выляни.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Вăйăа урамра ирттерсен аванрах.

В о с п и т а т е л ь (*ачасене хитре конверт кăтартса*). Ачасем, эпĕ паян ача садне кĕрсен çак çырăва асăрхарăм. Мĕн çырнă-ши унта? Сирĕн пĕлес килет-и? Атьăр-ха, уçса вулар. (*Çырăва вулать.*) «Сывă-и, ачасем? Сире çыру çыраканĕ – пĕчĕк çеç пукане – Пӳрнеске. Эпĕ çав тери пĕчĕккĕ, çавăнпа та эсир мана курмасан та пултаратăр. Эсир питĕ ырă та савăнăçлă ачасем, çавăнпа та эсир мана питĕ килĕшрĕр. Эпĕ сире валли парне хатĕрлерĕм. Парнене урамра, сад пахччинче, хăвартăм. Эсир уçăлма тухсан ăна куратăрах. Сывă пулăр, сире ăнăçу сунатăп. Салампа – Пӳрнеске».

Ачасем, сирĕн Пӳрнеске мĕнле парне хăварнине пĕлес килет-и?
Апла пулсан, атьăр урама тухатпăр.
Урама тухсан воспитатель йĕри-таврана тимлĕн сăнаса пăхма сĕнет.
Йывăç çинче çакăнса тăракан сырăша чи малтан асăрхакан ачасене мухтать.

В о с п и т а т е л ь (*сырăша йывăç çинчен илсе ачасене кăтартать*). Акă мĕнле парне хăварнă Пӳрнеске! Ачасем, кам пĕлет, ку мĕн? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Тĕрĕс, ку – сырăш. Ку сырăша кайăксем валли тунă. Хĕлле, урамра сивĕ те юр нумай чухне кайăксене çимелли тупма питĕ йывăр, çавăнпа çынсем сырăшсем çакаççĕ. *(Я. Рогачёв çырнă «Сырăш» сăвă сыпăкне итлеме сĕнет).*

Эп сырăш çакрăм хурама çине,
Ялан хуратăп ирсерен çиме.
Тĕпренчĕкпе сап-сар вир пĕрчине
Сăхаççĕ кайăксем çине-çине…

Сырăша кайăксем валли тырă, хĕвел çаврăнăш, çăкăр тĕпренчĕкĕсем хураççĕ. (*Ачасене сырăша тытса пăхма сĕнет*). Ачасем, сырăша йывăçран тунă. Унăн тĕпĕ те пур, тăрри те пур. Тĕпне эпир апат хуратпăр, тăрри вара çумăрпа юртан хӳтĕлет. Йывăç çине çакса хума кантрасем те пур. Ача-

сем, Пӳрнеске сырăша мĕншĕн йывăç çине çакнă-ши? *(Ачасем хуравлаççĕ).* Тĕрĕс, кайăксем тӳпере çӳлте вĕçсе çӳреççĕ. Вĕсем йывăç çинче çакăнса тăракан сырăша тӳрех кураççĕ. Çӳлте вĕсене никам та кансĕрлемест – кушаксем те, йытăсем те кайăксене тытаймĕç. Ачасем, курăр-ха, Пӳрнеске сырăшпа пĕрле кайăксене çитермелли апат та хăварнă. Атьăр çимĕçе кайăксене хурса парар.

Маларах хатĕрленĕ тырра, хĕвел çаврăнăш вăррисене, çăкăр тĕпренчĕкĕсене воспитатель ачасемпе пĕрле сырăша сапса парать.

В о с п и т а т е л ь. Çăкăра алăпа питĕ лайăх вĕтетсе памалла, мĕншĕн тесен кайăксен сăмсисем пĕчĕк те шĕвĕр, çавăнпа та вĕсем пысăк çăкăр татăкĕсене çиеймеççĕ.

Апат хунă хыççăн воспитатель сырăша каялла йывăç çине çакать.

В о с п и т а т е л ь. Малашне урама тухсан кайăксем сырăшри апата çинине сăнăпăр.

Воспитатель «Салакайăк» юрă юрлама сĕнет.

Вĕçрĕ салакайăк,
Ларчĕ çул çине,
Сиккелет пит çăмăл:
Чăлт, чăлт, чăлт.

Сиккелет, çӳрет вăл,
Пĕрчĕсем пухать.
Юррине юрлать вăл:
Чим, чим, чим.

Сырăш çине кайăксем килсе ларчĕç пулсан ачасене мĕнле кайăк килнине каламалла. «Кайăксем вĕçеççĕ» вăйăа выляма юрать (кайăксем пек вĕçеççĕ, сиккелеççĕ, чимлетеççĕ, палăртнă вырăна пуçтарăнаççĕ).

5-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. **Юр кĕлеткепе чăрăш**

Тĕллевĕсем: йывăççене сăнама вĕрентесси; юртан юр кĕлетки купалама май пуррине кăтартасси; тавралăх илемне курма хăнăхтарасси.

Кăтарту хатĕрĕсем: юр кĕлетке тетте е чăн-чăн юр кĕлетке; çекĕлсемлĕ тĕрлĕ тĕслĕ ёлка теттисем; чăрăш (ача сачĕн пахчинче ӳсекенни е Çĕнĕ çул уявĕ хыççăн юр çине кăларса лартнни).

Маларах туса ирттернĕ ĕççем: Çĕнĕ çул уявĕ; ачасене «Юр çăвать» сăвва вĕрентни; уяв чăрăшне ӳкерени; тăмран юр кĕлеткесем ăсталани.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Вăйăа урамра ирттерме сĕнетпĕр.
Воспитатель ачасене чăрăш патне чĕнет. Чăрăш айĕнче Юр кĕлетке (тетте е чăн-чăнни) тăрать. Воспитатель сăмахне Л. Николаева çырнă «Юр кĕлетке» сăввипе пуçлать.

В о с п и т а т е л ь.

Иăваларăм, йăваларăм,
Юр кĕлетке купаларăм,
Шăпăр патăм аллине,
Кишĕр – сăмса вырăнне,
Пуç çинче вара – витре.
Пулчĕ тусăм пит хитре.

А ч а с е м (*воспитательпе пĕрле*). Сывлăх сунатпăр сана, Юр кĕлетке! Сана урамра тăма сивĕ мар-и?

Ю р к ĕ л е т к е. Эпĕ сивĕрен хăрамастăп, мĕншĕн тесен мана юртан тунă, çавăнпа та хĕлле эпĕ шăнмастăп. Тавтапуç, ачасем, эсир ман пата хăнана килтĕр. Эпĕ сире чăрăшпа паллаштарасшăн. Эсир килнишĕн вăл питĕ савăнать.

Воспитатель ачасене чăрăш лăссине питĕ асăрханса тытса пăхма сĕнет. Ачасем чăрăша сывлăх сунаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чăрăшăн лăссисем мĕнле? *(Ачасем хуравлаççĕ).* Тĕрĕс, ачасем, чăрăш лăссисем йĕплĕ. Лăсă çинче чикекен симĕс тĕслĕ йĕпсем питĕ нумай. Вĕсене питĕ асăрханса тытсан чăрăш лăссисем пӳрнесене тирĕнмеççĕ, ыраттармаççĕ.

Юр çинче чăрăш тураттисем выртаççĕ пулсан воспитатель ачасемпе вĕсене тытса шăршласа пăхать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чăрăш турачĕсем епле ырă шăршăллă! Пăхăрха чăрăш йывăççи ыттисенчен уйрăлса тăрать – вăл хĕлле те, çулла та симĕс тумлă. Çавăнпа та çынсем ун çинчен тупмалли юмах шутласа тупнă: «Хĕлле те, çулла та пĕр тĕслĕ. Мĕн вăл?». Ытти йывăçсем çинче хĕлле çулçăсем çук, вĕсем çара лараççĕ.

Ю р к ĕ л е т к е. Эпĕ те хĕллехи кунсенче чăрăша пăхса савăнатăп! Чăрăш çулла та хĕлле те – яланах илемлĕ. Ача садне ăна уява илсе каяççĕ. Эпĕ те Чăрăшпа пĕрле уява çитсе курма ĕмĕтленетĕп.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Чăрăша мĕнле уява чĕнеççĕ? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Тĕрĕс, Çĕнĕ çул уявне. Уявра Чăрăш вара питĕ-питĕ хитре: ăна тĕрлĕ тĕслĕ теттесемпе, çутăсемпе илемлетеççĕ. Юр кĕлетке, эпир санăн чăрăшна та илемлетĕпĕр –тĕрлĕ тĕслĕ теттесем çакăпăр, вара вăл питĕ капăр пулĕ.

Воспитатель ачасене теттесем парса тухать. Пурте чăрăша илемлетеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халь пирĕн чăрăш епле илемлĕ те капăр! Юр кĕлетке, эпир сана та теттесемпе капăрлататпăр, эсĕ те хитре пул.

Ю р к ĕ л е т к е. Ачасем, тавтапуç сире. Халь ĕнтĕ чăрăшпа иксĕмĕр те питĕ илемлĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Юр кĕлеткен кăмăлĕ питĕ савăк. Ăна кичем ан пултăр тесе юр кĕлеткесем татах та туса лартар.

Ачасем юр чăмăрккисем тăваççĕ, воспитатель вара пĕчĕк юр кĕлеткесем туса лартать.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ вара пирĕн юлташсен чăн-чăн уяв! Атьăр-ха, чăрăш йĕри-тавра тăрса пĕрер çавра юрă юрлар.

Ачасем «Хĕлле» юрă юрлаççĕ.

Хĕлле
Кĕвви те сăвви те А. Петровăн

Юр çăвать, юр çăвать,
Хура çĕре шуратать.
Тухăр урама ярăнма,
Юр купалама!

6-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. **Çăмламас кушак çури**

Тĕллевĕсем: килти чĕр чунсемпе паллаштарасси, вĕсен çурисене уйăрма вĕрентесси, ачасенче хĕрхенӳ туйăмĕ вăратасси; чăваш кил-çуртĕнче кăмака пулни çинчен калаçтарасси.

Кăтарту хатĕрĕсем: кăмака, кушак çури (тетте).

Маларах туса ирттернĕ ĕçсем: килти выльăх-чĕрлĕхе сăнлакан ӳкерчĕксене пăхни; «Кушак çури валли çăмха» темăпа ӳкерни; «Мăр-мăр кушак» юрра итлени (сăвви В. Харитоновăн, кĕвви Ю. Григорьевăн); «Кушак мĕншĕн апат хыççăн çăвăнать» литва халăх юмахне вулани; Б. Борленăн «Кушак» сăввине вулани.

В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, ку – кăмака. Пӳрт ăшăнтăр тесен кăмака хутмалла, вутă хурса çунтармалла. Урамра питĕ сивĕ чух ачасем кăмака çине хăпарса ларса ăшăнма та пултараççĕ. Ак, ачасем, пăхăр-ха, кăмака çинче темскер пур. *(Ачасене кушак çури (тетте) кăтартать.*) Ачасем, ку – пĕчĕк кушак çури. Эсир мĕнле шутлатăр, мĕншĕн вăл кăмака çинче выртать? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Паллах, ăна кунта килĕшет, кунта ăшă. Кăмака çинче выртнă чухне кушак çури хăйне амăшĕ çумĕнче выртнă пекех туять. Ачасем, кушак çурине ачашласа пăхăр-ха, вăл мĕнле?

А ч а с е м (*кушак çурине ачашласа).* Çемçе, çăмламас, пĕчĕк.

В о с п и т а т е л ь. Эпĕ сире пĕр юрă юрласа парасшăн, тимлĕ пулăр.

(Б.Чиндыков сăвви тăрăх Н.Казаков кĕвĕленĕ «Пирĕн йытă» юрă сыпăкне юрлать.)

Пирĕн кушак пысăккă!
Пирĕн кушак пĕчĕккĕ!
Пирĕн кушак хуп-хура!
Пирĕн кушак шап-шурă!

Хушса юраламалли:

Мăр-мăр-мăр! Мăр-мăр-мăр-мăр!
Кăс-кăс-кăс! Кăс-кăс-кăс-кăс!
Пирĕн кушак мăр-мăр-мăр!
Пирĕн кушак кăс-кăс-кăс!
Пирĕн кушак – ампарта!
Пирĕн кушак – ыйхăра!

Хушса юраламалли.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха хушса юраламаллине пĕрле юрлар.

А ч а с е м *(воспитательпе пĕрле).*

Мăр-мăр-мăр! Мăр-мăр-мăр-мăр!
Кăс-кăс-кăс! Кăс-кăс-кăс-кăс!

В о с п и т а т е л ь. Юрăри кушак мĕн ятлă? Кушакăн куçĕсем мĕнле? Кушакăн тумĕ мĕнле? Еплерех утать? Вăл мĕн тытать? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Маттур, ачасем! Ку кушак çурин çăмĕ вăрăм, çемçе, çавăнпа ăна Çăмламас ят панă. Ури тупанĕ унăн минтер пек, чĕрнисем вара ури тупанĕнче пытаннă. Эсир мĕнле шутлатăр, кушак çурине çивĕч чĕрнисем мĕн тума кирлĕ-ши? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Тĕрĕс, кушак çури хăйне мĕн те пулин килĕшмерĕ пулсан чĕрнисемпе чăрмалать. Кушак çурисем çăмхапа выляма юратаççĕ. Эпир ăна ăшшăн ачашлатпăр пулсан вăл пире нихçан та чăрмаламасть. Атьăр-ха, ачасем, кушак çурине ачашлатпăр. Кушаксем ачашланине питĕ юратаççĕ, мăрăлтатма тытăнаççĕ. Кушак çури мĕнле мăрăлтатать-ха? Тĕрĕс, ачасем, мăр-мăр! тет. Атьăр-ха кушак çинчен тепĕр хут пĕрле юрлатпăр.

А ч а с е м п е в о с п и т а т е л ь.

Мăр-мăр-мăр! Мăр-мăр-мăр-мăр!
Кăс-кăс-кăс! Кăс-кăс-кăс-кăс!

В о с п и т а т е л ь. Кушак çури мĕн çиме юратать-ши? (*Ачасен хуравĕсем*) Пĕчĕк кушак çурисем сĕт çиме юратаççĕ. Сĕт çиес килсен вĕсем мĕнле макăраççĕ? (*Ачасен хуравĕсем*) Тĕрĕс, мяу-мяу! Кушак çурине сĕт ярса парсан, вăл ăна чĕлхипе çиме тытăнать, кайран вара çулланать, питне çăвать. Кушак çурисем ăçта çывăрма юратаççĕ? Тĕрĕс, амăшĕ çумĕнче. Кушак çу-

рисен амăшĕ кам? (*Кушак.*) Енчен те кушак çурин амăшĕ юнашар пулмасан, вăл е вырăн çинче, е хуçин чĕркуççийĕ çинче, е кăмака çинче çывăрма юратать. Кашни кушакăн хăйĕн çывăрмалли вырăнĕ пур, унта ăна никам та кансĕрлемест. Кушак çурин выляс килсен – вылять, çывăрасси килсен вырăнĕ çине кайса выртать. Атьăр, эпир те кушак çурине вырăн çине хуратпăр, вăл выляса ывăнчĕ, кăштах çывăртăр. Ачасем, камăн килте кушак е кушак çури пур?

Воспитатель ачасене кушаксем çинчен каласа пама май парать. Килти кушакĕсемпе çеç выляма тата алла илсе ачашлама юранине асăрхаттарса хăварать. Кушак çурисен хырăмĕсем тутă пулсан вĕсем хăйсен хŭрисемпе те вылянине каласа парать. Кушаксем çынсене савăнăç кŭнине калать. Амăшĕ çурисене шăши тытма, çăмăллăн сикме, чупма вĕрентнине ăнлантарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха эпир сирĕнпе «Кушакпа шăшисем» ятлă вăйăа выляса илер.

Воспитатель пĕр аслăрах ачана кушак пулма суйлать, ытти ачасем вара шăшисем пулаççĕ. Вĕсем хăйсен йăвинче, стена çумĕнче пукансем çинче лараççĕ. Тепĕр енчи пукан çинче, 2–2,5 метр аяккарах, «кушак» ларать. «Шăшисем» «кушак» çывăрнă вăхăтра шăппăн чупаççĕ. «Кушак» куçне уçсанах «шăшисем» пукан çине кайса лараççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*майĕпен сăвă калать*).

Çул хĕрринче, сак çинче

Кушак выртнă, тĕлĕрет. *(«Кушак» куçне хупнă, «шăшисем» чупаççĕ.*)

Кушак куçне уçать те

Шăшисене хăвалать. *(«Кушак» куçне уçать, мяуклатса ачасем хыççăн чупать, «шăшисем» тараççĕ.*)

Мăр-мăр-мăр, мăр-мăр-мăр!

Ак тытатăп вĕт, ас ту! (*Шăши рольне вылякан ачасем пукансем патне тараççĕ те вĕсем çине лараççĕ. Кушак шăшисене тытмасть, хăвалать çеç.*)

Вăйăа 2–3 хут вылямалла.

7-мĕш вĕрентŭллĕ вăйă. **Автанпа унăн çемйи**

Тĕллевĕсем: килти кайăксемпе паллаштарасси, вĕсен чĕпписене уйăрма вĕрентесси, ачасенче чĕр чунсене хĕрхенес туйăма аталантарасси.

Кăтарту хатĕрĕсем: кайăк-кĕшĕк çурчĕ (вите), автан, чăх, чĕпсем – теттесем. Пластилин, ал ĕç хăми, салфетка.

Маларах туса ирттернĕ ĕççем: чăх, автан, чĕпĕ теттисемпе выляни; килти чĕр чунсене сăнани (*май пулсан*); В.Давыдов-Анатрин «Сар автан» сăввине вулани; сар чĕпĕсем çинчен юрă юрлани.

Вăйă юхăмĕ

Воспитатель Николай Карай çырнă «Кам вăл» шӳтлĕ сăвва вулать. Вуланăçемĕн ачасене автан теттене кăтартать, ăна тырă сăхнă пек тутарать.

Воспитатель.

Автан икĕ çунатне
Çат-çат-çат çапса юрлать.
Сар чăх сарă чĕппине
Тупмалли юмах калать:
«Кам вăл сар çăмха пекскер,
Пĕчĕкскер те чиперскер?»
Сарă чĕпĕ сиккелет:
«Анне,
Эп вăл,
Эпĕ», – тет.

Ачасем, автан сăмсипе сăхакан пĕрчĕсене тытса пăхар-ха. Автан мĕнле пĕрчĕсем сăхать-ши? Тырă пĕрчисем пĕчĕк, вĕсене автан сăмсипе сăхать. Автанăн сăмси шĕвĕр. Автан мĕнле юрлать? *(Ку-ка-ре-ку!)* Автан мĕнле утнине кăтартăр-ха. (*Ачасем кăтартаççĕ.*) Автан пуçне мăнаçлăн тытать, урине çӳллĕ çĕклет, çунаттине сарса суллать. Автан çумĕнче мĕн пур? Тĕрĕс, чăх. Автанпа чăх çине тимлĕ пăхăр-ха. Мĕнпе уйрăлса тăраççĕ вĕсем?

Воспитатель. Автанăн пысăк хĕрлĕ киккирик, чăххăн вара пĕчĕк; автанăн хӳри вăрăм, чăххăн – кĕске; автанăн ури çинче качи пур (*кăтартать*), чăххăн ун пек япала çук. Автан калăпăшĕпе те чăхран пысăкрах. Автанпа чăххăн пĕр пекки мĕн пур? Мĕн енчен вĕсем пĕр евĕрлĕ? Автанпа чăххăн кĕлетке, пуç, хӳре тата ура пур. Пуçĕ çинче куç, сăмса, киккирик пур.

Воспитатель. «Кăть-кăть-кăть!» Чăх мĕнсене чĕнет? Чăх чĕпписене чĕнет. Вăл вĕсене мĕнле чĕнет? *(Кăть-кăть-кăть).* «Акă манăн чĕппĕмсем – сарă ачасем» – тет.

Воспитатель кайăк-кĕшĕк витинчен темиçе сарă чĕпĕ кăларать.

Воспитатель. Чăх чĕпписем мĕнле? *(Пĕчĕк, сарă, çемçе...)*

Воспитатель ачасене пĕчĕк чĕпсене сăнама ыйтать. Автан, чăх, чĕпĕсем – килти кайăксем пулни çинчен калать. Вĕсем кил картинче çын çумĕнче пурăнаççĕ. Çынсем вĕсене пăхаççĕ. Чăхсем çăмарта тăваççĕ.

Воспитатель. Ачасем, автана, чăхха, чĕпсене мĕнпе хăналама пулать? Атьăр вĕсене хăналама пластилинран ăмансем, пĕчĕк тырă пĕрчисем ăсталатпăр.

Ачасем сĕтел хушшине лараççĕ, ĕçлеме тытăнаççĕ. Ĕçлесе пĕтерсен ачасем ăсталанă япаласене сырăша хураççĕ, аллисене салфеткăпа тасатаççĕ.
Воспитатель ачасене «Чăпар чăх» вайă выляма сĕнет.
Воспитатель – чăхха сăнарлать, ачасем – чĕпсене. Пĕр ача кушак пулать.
Кушак пĕр кĕтесре ларать, чăхпа чĕпсем пӳлĕмре çӳреççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Сар чăх тухрĕ чĕпсемпе,
Уçăлмашкăн урама.
Кăтиклетет: «Кăть-кăть-кăть,
Ан кайсамăр аякка!».

Малалла сăввине воспитатель сак çинче çывăракан кушак çывăхне пырса калать.

Çул хĕрринчи сак çинче,
Кушак аçи çывăрать.
Симĕс куçне вăл уçать,
Сар чĕпсене хăвалать.

Юлашки сăмахсемпе «кушак» сиксе тăрать, мăрлатать, амăшĕ патне чупакан чĕпсене хăвалать. Чăх чĕпсене хӳтĕлет, аллисене саркаласа кушака хăвалать: «Кай, кушак, памастăп сана чĕпсене!» Тепĕр хут выляна чухне урăх ача «кушак» пулать.
Вăййа 2–3 хут выляççĕ.

8-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. **Хĕвел, хĕвел, чӳречерен пăх**

Тĕллевĕсем: çуркунне пулакан улшăнусем çинчен тивĕçлĕ тĕшмĕртӳ йĕркелесси, хĕвел ӳкерме вĕрентесси.

Кăтарту хатĕрĕсем: фланелеграф, çурхи пейзаж (ӳкерчĕк) пуçтармалли пайсем, хĕвел ӳкернĕ пысăк çаврака хут листи, хĕрлĕ тĕслĕ гуашь, киçтĕксем, шыв ямалли савăт, салфетка, хутран касса каларнă пĕлĕт, сунчăк.

Маларах туса ирттернĕ ĕçсем: хĕвел ӳкернĕ ӳкерчĕксене сăнани; Б. Романовăн «Хĕвел, пăх» сăввине вулани; çуркунне çут çанталăкра мĕнле улшăнусем пулнине сăнани; хĕвел ӳкерни.

В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь. Ирхине эпир сирĕнпе хĕвел шевлипе вылярăмăр. Атьăр пăхатпăр, халĕ урамра хĕвел пăхать-и ?

Воспитатель ачасене чӳречерен пăхса çанталăка сăнама сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Çуркунне çитрĕ. Эпир урамра выляна чухне хĕвел пире хайĕн ăшă пайăркисемпе ăшăтрĕ. Хĕвел пире ăшă та çутă, хаваслă кăмăл парнелерĕ.

Воспитатель фланелеграф çинче çуркуннехи пейзажа калăплать, ăнлантарса пырать: «Тӳпере мĕн çутатать?…*(Хĕвел*). Çĕр çинче мĕн шăтрĕ?… (*Курăк*). Йывăçсем çинче мĕнсем тухрĕç? (*Çулçăсем*). Хĕвел тухнишĕн пуртте савăнаççĕ: кайăксем те, хурт-кăпшанкă та, йывăç-курăк та, чечексем те! Ачасем, сире хĕвел хĕртни килĕшет-и?

В о с п и т а т е л ь (*сăвă вулать*).

Хĕвел

Савăнаççĕ чĕр чунсем,
Хĕпĕртеççĕ кайăксем:
Çӳл тӳпе хĕвеллĕ,
Ачасем телейлĕ.
Кашни кун хĕвел пуртан
Выляма ирех тухсан
Эп юрлатăп юрă –
Пурăнмашкăн ырă!

В. Эктел

В о с п и т а т е л ь. Чĕр чунсем, кайăксем тата ачасем мĕншĕн хавас? (*Хĕвел пурришĕн.*) Хĕвел тухнишĕн эсир савăнатăр-и? Хĕвел ӳкерме эсир мĕн тĕслĕ сăрă суйласа илетĕр?

Воспитатель ачасене киçтĕксем илсе хĕвел пайăркисене ӳкерме сĕнет (ватман çине çаврака хĕвел ӳкерсе хатĕрлемелле).
Ачасем ӳкернĕ чухне воспитатель Б. Романов çырнă сăвва калать, ачасем вĕрентекен хыççăн каласа пыраççĕ:

Хĕвел, пăх,
Хĕвел, пăх!
Çупа çăкăр çитереп! –
Хĕвел пахрĕ те çуталчĕ,
Самантрах куçран çухалчĕ.

– Хĕвел, пăх!
Хĕвел, пăх!
Çупа çăкăр çитереп! –
Хĕвел ăшшăн шурĕ тухрĕ,
Тепĕр хут мана тав турĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ пирĕн хамăрăн пысăк илемлĕ хĕвел пур, эпир ăна хамăр ушкăн пӳлĕмне çакса хурăпăр.

Хĕвел ӳкерчĕкне курăнакан вырăна çакса хураççĕ те «Хĕвел тата çумăр» вăйă выляççĕ. Воспитатель хĕвеле касса кăларнă пĕлĕтпе хуплать, ачасене çумăр пуçланни çинчен калать. Пысăк сунчăка уçать те – йĕпенсе чирлесрен ачасене сунчăк айне пытанма чĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Тӳпере хĕвел пăхать! Уçăлма тухма юрать!

Ачасем пӳлĕм тăрăх чупаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Çумăр çăвать! Хăвăртрах сунчăк айне пытанăр! Ачасем пысăк сунчăк айне пытанаççĕ.

Ваййа темиçе хут выляççĕ.

9-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. **Кукша пуç чечекленет**

Тĕллевĕсем: çурхи чечексене сăнама вĕрентесси; кукша пуçпа паллаштарасси, уйрăмлăхне палăрасси; çут çанталăк илемне курма вĕрентесси.

Кăтарту хатĕрĕсем: Маша пукане, кукша пуç.

Маларах туса ирттернĕ ĕçсем: кукша пуça сăнани; кукша пуça ӳкерни е хатĕр ӳкерчĕке сăрласа илемлетни.

В ă й ă ю х ă м ĕ

Вăййа урамра ирттерме сĕнетпĕр.
Ачасем урама Маша ятлă пуканепе тухаççĕ.
Воспитатель ачасене çут çанталăк илемне сăнама ыйтать: кайăксем юрлаççĕ, хĕвел пăхать, курăк ӳсет, йывăçсем çинче çулçăсем пур, кукш пуç чечеке ларнă.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чечек çурнă кукша пуça Машăна катартăр-ха. Машук, пăх-ха, мĕн чухлĕ кукша пуç пирĕн лаптăкра!

Воспитатель ертсе пынипе ачасем кукша пуçсем çывăхнерех пыраççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Машăна кукша пуçăн тунине кăтартăр-ха, вăл мĕнле пулнине калăр.

Ачасем пуканене кукша пуç тунине кăтартса вăл мĕнле пулнине калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь *(ачасем каланине пĕтĕмлетсе*). Кукша пуçăн туни вăрăм та яка, кĕпçе евĕрлĕ, вăл çăмăллăнах хуçăлма пултарать. Кукша пуçăн тата мĕн пур? Тĕрĕс, çулçисем. Кукша пуç çулçисем мĕнле-ши?

А ч а с е м. Кукша пуç çулçисем симĕс тĕслĕ, çулçă хĕррисем касăк.

В о с п и т а т е л ь. Кукша пуçăн тата мĕн пур? (*Чечекĕ).* Ачасем, мĕн еверлĕ çак чечексем? *(Хĕвел пек).* Чăнах та, чечексем пĕчĕк хĕвелсем пек. Ак ку чечекĕ вара пĕрре те сарă мар (*Вĕрентекен кукшапуç мамăкне кăтартать*), ун çинче сарă чечексем вырăнне – шурă мамăк. Ачасем, мĕнле шутлатăр, ку кукша пуç-и?

В о с п и т а т е л ь. Ку та кукша пуçах, анчах та унăн сарă чечексем хыççăн пулса çитнĕ вăрлăхсем – шурă мамăксем тухаççĕ. Вĕсене çил вĕçтерсе салатать. Унтан вĕсенчен çĕнĕ кукша пуçсем шăтса тухаççĕ.

Воспитатель ачасене шурă мамăка мĕнле вĕрмеллине кăтартать. Унтан кашни ачана пĕрер кукша пуç татса парать. Машăна вĕрсе кăтартма ыйтать. Мамăк ачасен куçне ан кĕтĕр тесен, ăна çын çук еннелле вĕрмеллине асăрхаттарать.
Воспитатель Николай Ыдарай çырнă «Кукша пуç» сăвва вуласа парать.

Ман умра ешĕл улăх,
Пĕр вĕçĕмсĕр инçет,
Чечек çыххи ятулăх
Пухса çӳрес килет.

Ак ку çавра калпаклă,
Шап-шурă пĕчĕк шар:
Вĕрес пулсан вăл, паллă,
Вăррине сапать чăл-пар.

Юлать тапки вара
Калпаксăр, çара пуç.
Тен, çавăнпа-и Чăвашра
Ун ячĕ – Кукша пуç.

В о с п и т а т е л ь. Пăхăр-ха, епле хитре – симĕс уçланкăра çеçке çурнă кукша пуçсем! Йĕри-тавра илемлĕ пултăр тесен, чечексене упрамалла, кирлĕ-кирлĕ маршăн вĕсене татмалла мар!

ХУШСА ПАНИСЕМ

1-мĕш хушса пани

«Мулкач кишĕр çитерет» темăпа хатĕрленнĕ май мулкача тата кишĕре сăрласси.

2-мĕш хушса пани

«Асамçă кĕркунне» темăпа сăрламалли çулçăсем.



3-мĕш хушса пани

«Сырăш умĕнче» темăпа ӳкересси.
(Панă кайăк кӳлепипе юнашар ăман, тырă пĕрчи ӳкереççĕ.)



4-мĕш хушса пани

«Çăмламас кушак çури» темăпа ӳкерчĕк ӳкересси.
(Кушак çурипе юнашар çăмха ӳкереççĕ.)



5-мĕш хушса пани

Хĕвел ӳкерни е хатĕр ӳкерчĕке сăрласа илемлетни.



6-мĕш хушса пани

Кукша пуçа ӳкерни е хатĕр ӳкерчĕке сăрласа илемлетни.



ТУПМАЛЛИ

УМЁН КАЛАНИ 3
Çулталăкăн тĕрлĕ тапхăрĕнче ирттермелли сăнавсем 4
Ачасемпе ĕçлессине темăсем тăрăх планлани..... 8
1-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Мулкач кишĕр çитерет 9
2-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Асамçă кĕркунне 11
3-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Пулă шывра ишет 12
4-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Сырăш умĕнче..... 14
5-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Юр кĕлеткепе чăрăш..... 15
6-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Çăмламас кушак çури 17
7-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Автанпа унăн çемйи 19
8-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Хĕвел, хĕвел, чӳречерен пăх 21
9-мĕш вĕрентӳллĕ вăйă. Кукша пуç чечекленет 23
ХУШСА ПАНИСЕМ 25

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

Морозова Светлана Геннадьевна
Ядранская Инесса Владимировна

ФОРМИРОВАНИЕ ПРЕДСТАВЛЕНИЙ ОБ ОКРУЖАЮЩЕМ МИРЕ

Методические указания для воспитателей дошкольных образовательных организаций, реализующих образовательные программы дошкольного образования с детьми 2–3-летнего возраста

Редактор *Р.П. Прокопьева*
Верстка *И.В. Матвеевой*

Подписано в печать . Формат 60x90/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № .

Чувашский республиканский институт образования.
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум». г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52.
Тел.: (8352) 32-05-01